Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

65 (8131) № ✻ Юн кун, 2013 çулхи авăн (сентябрь) уйăхĕн 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Пултаруллă ĕçчен

Республика Пуçлăхĕн стипендиачĕ

*Чăваш Республикинчи пултарулăхпа уйрăмах палăрса тăракан çамрăксемпе студентсене ятарлă стипенди парса чысланине хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Кăçал çак хавхаланăва районти 15 çамрăк тивĕçрĕ, вĕсем уйăхсерен 1830 тенкĕ илсе тăраççĕ.*

*Сăн ӳкерчĕкри Ольга Храмова стипендиат «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче технологра ĕçлет. Ял хуçалăх академийĕнче аслă пĕлӳ илнĕ çамрăк специалист шаннă ĕçе тивĕçлĕ шайра пурнăçлассишĕн тăрăшать. Асăннă отрасльте пысăк тупăш тата пахалăхлă продукци илессишĕн тимлет. Ăста технолог – ыттисемшĕн тĕслĕх тата шанчăклă юлташ.*

*Катькас ял тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ Ольга Леонидовна пурнăçне ял хуçалăхĕпе çыхăнтарнишĕн пачах та пăшăрханмасть.*



**Р. ИЛЛАРИОНОВА** сăн ӳкерчĕкĕ.

## Шăнкăрав янăрарĕ

Вĕренӳ çулĕ

***Районти шкулсенче хĕрӳ тапхăр пуçланчĕ. Пĕрремĕш шăнкăрав 3380 ытла ачана урока йыхравларĕ. Кашни шкултах сентябрĕн 1-мĕшĕнче уяв мероприятийĕ иртрĕ.***

**МУРКАШРИ ВĂТАМ ШКУЛТА**

Кунтан кăçал 71 çамрăк вĕренсе тухнă, вĕсенчен 83 проценчĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕнĕ. 2013–2014 вĕренӳ çулĕнче тăватă пĕрремĕш класа вара 84 ача йышăннă. Шкулти 5 «а» класс кадет класĕн программипе вĕренме тытăнать. Аслă классенче ачасем виçĕ енпе тарăнрах пĕлӳ илме пултараççĕ: социаллă-гуманитари, инженерипе техника тата çут çанталăк ăслăлăхĕсен енĕпе.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа шкул ачисене район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тата кунтан тĕрлĕ çулсенче вĕренсе тухнă выпускниксем саламланă.

**ЧУМАНКАССИНЧИ ВĂТАМ ШКУЛТА**

Пĕлӳ кунне халалланă савăнăçлă уява пуринчен ытла пĕрремĕш класа каякансем кĕтни палăрчĕ. Çуркунне шкултан 23 ача вĕренсе тухнă пулсан, халĕ пĕрремĕш хут парта хушшине ларакансем вун виççĕн. Пурĕ вара шкулта 190-а яхăн ача вĕренме пуçларĕ.

Уявпа ачасене район администрацийĕн физкультурăпа спорт тата туризм секторĕн ертӳçи В. Петров, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Белов тата ыттисем те саламласа парнесем пачĕç. Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх ертӳçи И. Захаров çулла хуçалăхра тăрăшнă Е. Борисова чаплă велосипед парса чысларĕ.

**ШОМИКРИ ТĔП ШКУЛТА**

Пĕлӳ кунне кунта та йышлăн уявланă: ачасемпе тĕл пулма «Чувашиякурорт» санатори» акционерсен уçă обществин тĕп директорĕ, ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н. Ванеркин, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ М. Каликов тата ыттисем те килсе çитнĕ.

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче иртнĕ «Конституци урокĕ» Шомикри тĕп шкулта вĕренекенсен асĕнче нумайлăхах юлĕ. Урокăн пĕрремĕш пайĕ шкулти коридорта пурне те пĕрле пухнă. Историпе обществознани предмечĕсене ертсе пыракан А. Юнусов вĕренекенсене презентаципе паллаштарнă, çĕнĕ Конституцин историне, правасемпе ирĕксем çинчен каласа панă. Урока вырăнти депутат В. Ямангеев, малтан Чăваш Ен ял хуçалăх министрĕ пулнă Л. Фадеев та хутшăннă.

«Конституци урокĕн» иккĕмĕш пайĕ кашни класра уйрăммăн иртнĕ. Вĕрентекенсем палăртнă тăрăх ачасем çĕр-шывăн тĕп саккунĕн иккĕмĕш пайĕпе (вăл çыннăн прависемпе тата ирĕкĕсемпе çыхăннă) ытларах кăсăкланнă.

**Н. НИКОЛАЕВА** хатĕрленĕ.

Хавхалантару

## Пуçлăхран – стипенди

Физикăпа математика вĕренессинче пысăк ăнăçусем тунăшăн Чăваш Республикин Пуçлăхĕн ятарлă стипендине студентсем пĕрремĕш хут пĕлтĕр илнĕччĕ. Вăл 2 пин тенкĕпе танлашать. Стипендие Чăваш Енри професси паракан вĕренӳ учрежденийĕсенче вĕренекен студентсене пĕр çул тӳлесе тăраççĕ. Тĕп услови – пулас стипендиатсен патшалăх пĕрлехи экзаменĕнче физика тата математика предмечĕсемпе 70 балран сахал мар пухмалла.

Стипенди илме тивĕçекенсенчен вĕренӳ учрежденийĕсенче документсене сентябрĕн 1-мĕшĕнче йышăнма пуçларĕç, йышăну тапхăрĕ декабрĕн 25-мĕшĕччен тăсăлать.

Кăçал пирĕн республикăри 408 выпускник физика тата математика предмечĕсемпе иртнĕ патшалăх пĕрлехи экзаменĕсенче 70 тата ытларах балл пухнă. Çаксенчен 227-шĕ Шупашкарти шкулсенчен, 67-шĕ Çĕнĕ Шупашкарти шкулсенчен вĕренсе тухакансем пулнă. Пурĕ вара вĕсенчен Чăваш Енри аслă шкулсене 80 çамрăк вĕренме кĕнĕ. Ытларахăшĕ И. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетне (72).

**Хамăр инф.**

Йыхрав

## Ăмăртăва хатĕр-и?

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн çитес шăмат кун, сентябрĕн 7-мĕшĕнче, спорт ăмăртăвĕ ирттерме палăртнă. Çак ăмăрту Чăваш Ен спортпа пресса фестивалĕн 1-мĕш тапхăрĕ шутланать. Унта çĕнтерекенсем шăпах Шупашкарта иртекен асăннă фестивале хутшăнма тивĕçĕç.**

**Çулсеренех иртекен çăмăл атлетика эстафетинче кăçал та шкул ачисен тата аслисен командисен старчĕсем пулаççĕ: вăтам шкулта тата тĕп шкулта вĕренекенсен командисенче 3 арçын ачапа 3 хĕр ача, организацисемпе предприятисенчи, учрежденисенчи, ял тăрăхĕсен, учительсен ĕç коллективĕсен командисенче 3 арçынпа 2 хĕрарăм пулмалла. Пурте пĕр пек дистанци чупаççĕ – 400-шер метр.**

**Мала тухнă командăсене парнесемпе дипломсем, медальсем кĕтеççĕ. Вăтам тата тĕп шкулсен çĕнтерӳçĕ командисене – куçса çӳрекен кубоксем те. Пурне те стартра кĕтетпĕр.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

Çырăнтару – 2013

## Хаçатсăр кĕркунне те, хĕлле те кичем

**Хаклă вулаканăм! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата октябрь уйăхĕнчен илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Малашне те пĕрле пулар!**

Республикăра

## Ял хуçалăхне пулăшма – 169 млн тенкĕ

Республикăна ял хуçалăх продукцийĕ туса хатĕрлекенсене пулăшма федераци бюджетĕнчен черетлĕ пулăшу килсе çитнĕ. Вăл шутран:

– 57,6 млн тенкĕ – ӳсен-тăран продукцийĕ туса хатĕрлекенсене пулăшма;

– 50,7 млн тенкĕ – ӳсен-тăран продукцийĕ туса илессине, продукцие тирпейлессине тата сутассине аталантарма илнĕ кĕске вăхăтлăх кредитсен (займсен) процент ставкисен пĕр пайне саплаштарма;

– 49,8 млн тенкĕ – ял хуçалăх продукцийĕ туса хатĕрлекенсене сутнă сĕтĕн 1 литрĕ пуçне кайнă тăкаксен пĕр пайне саплаштарма;

– 3 млн тенкĕ – выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ туса илессине, продукцие тирпейлессине тата сутассине аталантарма илнĕ кĕске вăхăтлăх кредитсен (займсен) процент ставкисен пĕр пайне саплаштарма;

– 0,6 млн тенкĕ – улма-çырла культурисем лартса ӳстерме кайнă тăкаксен пĕр пайне саплаштарма.

Пĕтĕмпе республикăна 2013 çулта ял хуçалăх продукцийĕ туса хатĕрлекенсене пулăшма федераци бюджетĕнчен 1 млрд та 55,6 млн тенкĕ уйăрса панă. Ку вăл çултталăк валли палăртнă суммăн 97,8 процентĕпе танлашать.

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Центр хыпарлать

Çулталăк пуçланнăранпа районти ĕçпе тивĕçтерекен центра пулăшу ыйтса 878 çын пынă. Сентябрĕн 2-мĕшĕ тĕлне официаллă майпа регистрациленĕ ĕççĕррисен шучĕ 55 пулнă, вакансисен хисепĕ – 190.

Çулталăк пуçланнăранпа яланлăх тата вăхăтлăх ĕçпе 803 çынна тивĕçтернĕ, 75-шне обществăлла ĕçе явăçтарнă. 14 – 18 çулсенчи 457 çамрăка вăхăтлăх тата яланлăх ĕçпе тивĕçтернĕ, 12 çын валли Раççей регионĕсенчи организацисенче ĕç вырăнĕ тупнă.

## Демографи лару-тăрăвĕ

Кăçалхи сакăр уйăхра 269 ача (138 хĕр ача, 131 арçын ача) кун çути курнă, иртнĕ çулхи çак тапхăрта – 291. Икĕ çемьере вара пĕр харăсах икшер ача çуралнă.

Çут тĕнчерен 359 çын (164 арçын, 195 хĕрарăм) уйрăлнă, иртнĕ çулхи сакăр уйăхра вĕсен хисепĕ 393-ĕн пулнă. 129 мăшăр ĕмĕр вĕçне тухиччен пĕрле утма сăмах татнă, уйрăлнисен хисепĕ – 59.

## Курав ĕçлет

Ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăра черетлĕ кĕнеке куравĕ уçăлнă, ăна пĕлӳлĕхе халалланă. Вăл сентябрĕн 14-мĕшĕччен ĕçлет. Студентсемпе аслă классенче вĕренекенсем валли уйрăм пай пур. Словарьсемпе энциклопедисем те кашнинех кăсăклантарĕç. Çапла вара вулавçă интереслине чылай тупĕ. Пĕтĕмĕшле илсен вара район библиотекисене килнĕ çын пушă алăпа тухмĕ, кунти ĕçченсем яланах пулăшма хатĕр. Кĕнеке тусĕсем валли алăксем уçă.

## «Илем» – кӳршĕ районта

«Илем» ансамбль артисчĕсем районти куракана кăна мар, ытти районсене тухса та савăнтараççĕ. Çак тĕллевпе вĕсем концерт программипе Етĕрне районĕнче пулчĕç. Тĕрлĕ юрă-кĕвĕ кашни куракана тыткăнларĕ. Çавăнпа та асăннă коллектив хаваслă кăмăл-туйăмпа таврăнчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА** хатĕрленĕ.

Саламлатпăр

Чкалов ячĕпе хисепленекен кооперативри тĕп бухгалтера **Вера Александровна ЕГОРОВĂНА** 55 çулхи сумлă юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр.

**Кооператив ĕçченĕсем.**



Çĕр çинчи чи хаклă аннене, хунямана, юратнă кукамая, тараватт тăвана – Мăн Хураçкара пурăнакан **Серафима Федоровна ЕГОРОВĂНА** сумлă юбилейпа, 85 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – хĕвел ăшши, уйăх çути, пур енĕпе те ырă тĕслĕх, ĕçчен кил хуçи. Хаклă çыннăмăр, сана татах та нумай пурăнса пире савăнтарма çирĕп сывлăх, пархатарлă та вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эс пурришĕн савăнса сан умра çĕре çити пуç таятпăр.

**Ăшă салампа хĕрĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ, тăванĕсем.**

# Ял хуçалăхĕ субсиди кĕтет

**Укçа-тенкĕ**

***Пĕр тĕл пулура ял хуçалăх предприятийĕн ертӳçи пăшăрханса калаçрĕ, унăн организацийĕ иртнĕ çултанпа вара инвестици кредичĕн процентчĕсене саплаштарма уйăракан субсидие илеймен. Çакăн пек йывăрлăх-çитменлĕх пирки ытти ертӳçĕсенчен те илтме пулать.***

Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствинчен пĕлтернĕ тăрăх федераци шайĕнчен ку тĕлĕшпе уйăрнă укçа-тенкĕне ял хуçалăх предприятийĕсем патне çитерне. Пĕтĕмпе вара выльăх-чĕрлĕх тата ӳсен-тăран отраслĕсем валли 2013 çулшăн патшалăх шайĕнче инвестици кредичĕсен процентчĕсене субсидилеме 37,526 миллиард тенкĕ палăртнă. Анчах та мĕн уйăрни ял хуçалăх предприятийĕсене туллин тивĕçтерме çителĕксĕр, çавăнпа та кредита саплаштарасси çĕр ĕçченĕ ыйтнă пек пурнăçланаймасть.

Юлашки тапхăрти лару-тăрăва тишкерес пулсан çак йывăрлăх пирĕн республикăра кăна мар, ытти регионта та кулленхи ĕçре ура хурать. Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерстви ку енĕпе тивĕçлĕ утăмсем тăвать, вăл шутра норматив шайлашăвне те йĕркелет.

«АПК аталанăвĕ» приоритетлă наци проекчĕ пурнăçланнă тапхăрта Чăваш Республикинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 157 объект çĕкленĕ, реконструкциленĕ, модернизациленĕ. Асăннă инвестици проекчĕсене кредит ресурсĕсене явăçтарнипе хута янă. Çак отрасльте вара мĕн тăкакланине 10 – 15 çулта кăна саплаштарма пулать. Шайлашулăха федераци шайĕнчи субсидипе шутланă, асăннă йĕркепе тата 545 миллион тенкĕ кирлĕ.

Малтанхи шутлав тăрăх кăçалхи çулшăн Раççей аграрийĕсене выльăх-чĕрлĕх тата ӳсен-тăран отраслĕсене хывнă инвестици кредичĕсене саплаштарма кăна татах 7,5 миллиард тенкĕ кирлĕ, 2014 çул валли – 14 миллиард тенкĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Пенси фондĕнчен хыпарлаççĕ**

## Çынсен ыйтăвĕсене хуравлĕç

Ял тăрăхĕсене тухса çынсемпе тĕл пулусем йĕркелеме, вĕсен кулленхи ыйтăвĕсене татса пама, кирлĕ сĕнӳсемпе пулăшма районта мобильнăй ятарлă бригада йĕркеленĕ. Ун шутĕнче районти социаллă хӳтлĕх пайĕн, çынсене социаллă пулăшу паракан центрăн, Пенси фончĕн районти управленийĕн специалисчĕсем. Бригада членĕсем сентябрĕн 3-мĕшĕнче Уйкас Янасал тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсенче пулма ĕлкĕрчĕç те ĕнтĕ. Ытти ял тăрăхĕсенче вĕсем сентябрь уйăхĕнче çак графикпа пулĕç:

| Ял тăрăхĕсем | Хăш кун | Миçе сехетре |
|---|---|---|
| Мăн Сĕнтĕр | 5-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Ильинка | 5-мĕшĕнче | 13 сехетре |
| Катькас | 10-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Ярапайкасси | 10-мĕшĕнче | 13 сехетре |
| Хорнуй | 12-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Москакасси | 17-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Оринин | 17-мĕшĕнче | 13 сехетре |
| Çатракасси | 19-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Шетмĕпуç | 19-мĕшĕнче | 13 сехетре |
| Турай | 24-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Чуманкасси | 24-мĕшĕнче | 13 сехетре |
| Юнкă | 26-мĕшĕнче | 10 сехетре |
| Ярославка | 26-мĕшĕнче | 13 сехетре |

## Ĕçлекенсен пенсисем ӳсрĕç

**Августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса республикăри ĕçлекен 87 пин ытла пенсионерăн пенси виçи ӳсрĕ. Ку вăл ĕç пенсийĕ илсе тăракансен виççĕмĕш пайĕ пулать.**

Пенсисене çĕнĕрен шутласа палăртасси çын пенсие тухнă хыççăн е пенси виçине юлашки хут корректировка тунă хыççăн страховани взносĕсем куçнипе çыхăннă. Унăн сумми кашнийĕнех расна. Çавăнпа та пенси виçи мĕн чухлĕ ӳсни те тĕрлĕрен. Чăваш Республикипе ӳсĕм шайĕ вăтамран 121 тенкĕпе танлашать пулсан, Муркаш районĕпе вăл 96 тенкĕ пулчĕ.

Ватлăха пула, инвалида тухнипе тата çемьере тăрантаракана çухатнипе ĕç пенсийĕ илсе тăракансен пенсийĕсене кашни çулах августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса автоматла майпа корректировка тăваççĕ. Енчен те гражданин пенси виçине урăх датăран тытăнса çĕнĕрен шутлаттарасшăн пулсан (пенсие тухнă хыççăн е пенси виçине унччен корректировка тунă хыççăн 12 уйăх иртсен), унăн августри корректировкăна хутшăнас марри пирки заявлени çырса парас пулать.

# Хыпкаланма кирлĕ мар

Хальхи вăхăтра массăллă информаци хатĕрĕсенче ача пур çемьесене патшалăх пулăшăвĕпе тивĕçтерессин программи малашне мĕнле аталанасси пирки хĕрӳ калаçу пырать. Çавна май Раççей Пенси фончĕ çавăн пирки пĕлтерет: ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕсене илнисен хыпкаланма кирлĕ мар. Сертификатпа усă курассин вăхăтне чикĕлемен, унпа кирек хăçан та усă курма пулать. Сертификатпа 2016 çулччен усă курса юлас пулать текен сас-хура чăнлăхпа пĕр килмест. Кунсăр пуçне çемьене иккĕмĕш е хыççăнхи ача усрава илнисене программăран кăларасси пирки ыйту нихăçан та пулман. Сертификат илессипе ачан ашшĕ-амăшĕпе ачана усрава илекенсен прависем пĕр танах.

Хальхи вăхăтра федераци законодательствипе килĕшӳллĕн ача амăшĕн капиталĕн сертификатне тивĕçес тесен сертификата тивĕçме май паракан ача 2016 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен çурални е ăна усрава илни кирлĕ. Анчах та сертификачĕпе вара кирек хăçан та усă курма пулать, унăн вăхăтне палăртса хуман.

Çапла вара ача амăшĕн капиталĕн сертификачĕпе усă курма право пуррисен унпа хăвăртрах усă курса юлма васкама сăлтав çук. Çитменнине унăн виçине çуллен индексацилесе пыраççĕ. Акă 2007 çулта вăл 250 пин тенкĕпе танлашнă пулсан, 2013 çулта – 409 пин тенкĕне яхăн.

2007 çултан тытăнса районĕпе ача амăшĕн капиталĕн сертификатне 1412 çемье илнĕ. Чăваш Республикипе кун пек çемьесем 45,6 пин. Ача амăшĕн капиталĕпе усă курса районта 631 çемье, Чăваш Енре 23 пин çемье, Раççейре 2 миллиона яхăн çемье хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатнă. Кунсăр пуçне капитала ачисене вĕрентме яма çĕршывĕпе 75 пин (республикипе – 552, районĕпе – 22) заявлени йышăннă. Капитала ача амăшĕн пухăнакан пенсине пысăклатма уйăрнисем Раççейĕпе 1,6 пин çын. Районĕпе кун пеккисем çук.

# Ачисем валли ытларах уйăраççĕ

Федераци саккунĕ вăя кĕнĕренпе ача амăшĕн капиталне хăйсен ачисене аслă вĕренӳ заведенийĕсенче тата колледжсенче вĕрентнĕшĕн, ача сачĕсене çӳретнĕшĕн тӳлеме уйăракансем районĕпе 22 çемье пулнă. Çав тĕллевпе пĕтĕмпе 811,4 пин тенкĕ уйăрнă. Республикипе кун пеккисем 552 çемье 15 млн тенкĕ уйăрнă.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май укçа-тенкĕпе çав тĕллевпе усă куракансем уйрăмах ытларах. Ача амăшĕн капиталĕпе усă курса çемьери кирек хăш ачана та вĕрентме май пур. Вĕренӳ тапхăрĕ пуçăниччен ачан ӳсĕмĕ 25 çултан ытла пулмалла мар кăна. Раççейри кирек хăш вĕренӳ учрежденине те суйласа илме ирĕк пур. Кунсăр пуçне укçа-тенкĕпе вĕренӳ тапхăрĕнче общежитире пурăннăшăн тӳлеме те усă курма пулать.

Аслă вĕренӳ заведенийĕсемпе колледжсенче вĕреннĕшĕн тӳленипе пĕрлех ачасем вĕренӳ курсĕсене çӳренĕшĕн те тӳлеме юрать. Калăпăр, ют чĕлхесен курсне çӳренĕшĕн. Çавна валли патшалăх аккредитацийĕ илнĕ вĕренӳ заведенийĕпе килĕшӳ тăвас пулать.

Ача амăшĕн капиталĕпе ачасене муниципалитетăн е харпăр хăйĕн ача сачĕсене çӳретнĕшĕн тӳлеме те усă курма ирĕк пур. Республикипе çав тĕллевпе 120 çемье 845 пин тенкĕ уйăрнă та ĕнтĕ. Районĕпе вара 4 çемье 8,5 пин тенкĕ уйăрнă. Ку мелпе усă курас текенсен Пенси фондне ача сачĕпе тунă килĕшĕве тата куçармалли укçа-тенкĕ суммипе реквизитсене тăратмалла. Пĕрремĕш тӳлеве заявлени панăранпа икĕ уйăхран кая юлмасăр куçарса параççĕ, ыттисене – заявленире кăтартнă тапхăрта.

2007 çултанпа районĕпе ача амăшĕн капиталĕн сертификатне 1412 çемье тивĕçнĕ пулсан, çурри ытла унпа усă курнă та ĕнтĕ. Усă курнă пĕтĕмĕшле сумма 206,5 млн тенкĕпе танлашать.

Кăçал ача амăшĕн капиталĕн сумми 408960 тенкĕ ытларах.

# «Предпринимателĕн харпăр хăй кабинечĕ»

Чăваш Енре Пенси фончĕн сайтĕнче «Предпринимателĕн харпăр хăй кабинетне» тестласси ăнăçлă иртрĕ. Сăнавлă майпа электрон сервисĕпе усă курасси вĕçленнĕ пирки отчета Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ Мускава ярса пачĕ.

Тест июль уйăхĕнчен тытăнса пĕр уйăх çурă хушши пычĕ. Çав тапхăрта харпăр хăй кабинетĕнче районти 10, республикăри 510 предприниматель регистрациленчĕ. Пĕтĕмпе вара çĕнĕ электрон сервиспа 1265 çын усă курма кăмăл турĕ. Ку вăл малтан палăртнинчен ытларах. Предпринимательсем харпăр хăйĕн электрон кабинечĕн уссине тӳрех туйса илчĕç. Кунта обязательнăй пенси тата медицина страхованийĕн взносĕсем тӳлесси енĕпе парăмсем пурри пирки тӳрех пĕлме, взноссемпе пенисем тата штрафсем тӳлеме, патшалăх пенсисене хушса финансласси программине хутшăнса хушма страховани взносĕсем хывма квитанцисене пичетлесе кăларма пулать.

Кунпа пĕрлех РФ Пенси фончĕн уйрăмĕ хăйĕн пуçарăвĕпе август уйăхĕнчен тытăнса сăнавлă майпа «Ĕç параканăн харпăр хăй кабинечĕн» электрон сервисне пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Харпăр хăй кабинетĕнче республикăри 504 организаци, вăл шутра районти 59 организаци ăнăçлă регистрациленчĕ. Пенси фончĕпе çыхăнусене çапла майпа йĕркелени ĕç паракансемшĕн меллĕ.

Предпринимательсемпе ĕç паракансен харпăр хăй кабинечĕсем pfr.cbx.ru адреспа пулĕç. Пенси фончĕ пур страхователĕсене те çак электрон сервиспа усă курма чĕнсе калать.

**Пенси фончĕн районти управленийĕ.**

**Пурнăç çулĕ**

# Юратнă вĕрентекен

**(Малалли. Пуçл. иртнĕ номерсенче).**

Январь уйăхĕн варринче вĕренме ячĕç. Эпир пурте пыйтланса кайнă. Сĕнтĕрвăррине çитсен аран пыйтăран тасалса пĕтрĕмĕр. Вĕренмелли нумай, программăран юлнă, хăваласа çитмелле. Çутă çук. Пĕчĕк кĕленчесене краççын ярса, çипрен тунă фитиль çутипе хамăр мĕн çырнине, кĕнекесене куççем хытса лариччен вулаттăмăр. Вара лекцинче выртса е ларса преподаватель мĕн-мĕн каланине аса илсе лараттăмăр. 400 грамм çăкăрне ирхи 3 – 4 сехетре черете кайса 7 сехет çурăччен тăрсан та илейместтĕмĕрччĕ, çăкăр çук. Столовăйĕнче çăкăрсăр çиетпĕр те лекцие каятпăр. 2 – 3 турам çĕр улмипе купăста янă яшкаччĕ унта та. Çуркунне çитсен серте, вĕлтрен пуçтарса килсе хураттăмăр. Вырсарни кунсенче кăмака хутма вуттине хамăр тататтăмăр, çураттăмăр.

Çапла нушаланса вĕренсе пĕтертĕмĕр. Экзаменсем тытрăмăр. Наркомпросран пырса пире кам ăçта каяссине назначени пачĕç. Мана вара Сĕнтĕр районĕнчи Шатракасси шкулне ячĕç. Çапла вара эпĕ 1942 çулхи августăн 16-мĕшĕнче Шатракассинчи тулли мар вăтам шкулта ĕçлеме пуçларăм.

Коллектив çамрăк хĕр ачасенчен тăратчĕ. Директор Василий Сергеевич Павлов пулнă. Пуçламăш классенче тепĕр арçын пулнă – Илья Григорьевич Григорьев. Шкулăн хутма вутă çук, ăна Хусантан Чул хулана каякан çул хĕрринчи хурăнсене касса (II Кĕтерне патша ларттарнăскерсене) çунашкапа, сайра хутра лашапа илсе килсе хутаттăмăр. Тетрадьсем çук, тĕрĕслев ĕçĕсем çырма кăна, ыттисене кĕнекесем çине, йĕрсем хушшинчи пушă вырăнсене çырнă. Çырма юман çулçи çинчи çăпансенчен сĕткенне кăларса тутăхнă пăта ярса чернил тунă. Вара вăл хура тĕслĕ пулатчĕ. Ачасем çăкăр çукран кăмакана пăрахса пĕçернĕ çĕр улми чиксе килетчĕç. Уроксем хыççăн 7-мĕш класс ачисем сухалама, сӳрелеме каятчĕç.

Сентябрь уйăхĕнче ачасемпе Атăл хĕрринчи вăрмансемпе улăхсене шăлан (шиповник) çырли пуçтарма çĕр выртмаллах каяттăмăр. Фронт валли эмел тума кирлĕ пулнă. Кĕркунне колхозсене çĕр улми кĕреçепе кăларма каяттăмăр. Вăл вăхăтра кашни ялăн уйрăм колхоз пулнă: Шатракасси ялĕ – «Родина» колхоз, Çеçмер – «Идея», Кĕрекаç – «Наука», Анаткасси – Лысенко яч. хис., Охтикасси – «Серп».

Учительсем ун чухне кашни колхозра агитаторсем пулса халăха çĕршыври лару-тăрупа паллаштарнă, заемсем çырăнтарнă, кашни эрнерех пухусем ирттернĕ. Мана «Серп» колхоза çирĕплетрĕç. Вăл пĕчĕк ялччĕ. Пенсие тухиччenех çав ялта агитатор пулса ĕçлерĕм. Кайран Шатракассипе Анаткасси колхозĕсем пĕр колхоза пĕрлешрĕç. Тата каярахпа 5 ялĕ пĕр колхоза пĕрлешрĕ – «Россия» туса хучĕç.

1942 çулхи сентябрь уйăхĕнче мана директор çумĕ пулса ĕçлеме хушупах çирĕплетрĕç. Пĕрремĕш çул ĕçлетĕп. Çамрăк, 19 çул çеç тултарнă, завуч пулса ĕçлеме хăратăп, килĕшесех килместчĕ. Сĕнтĕрти РОНО пуçлăхĕ – хама вĕрентнĕ учительница, класс ертӳçи пулнă Анфиса Максимовна Максимова. Ăна итлемесĕр тăраймарăм. Пĕлнĕ-пĕлмен ĕçлеме тытăнтăм. Учительсем çитменнипе шкула пуçламăш классенче ĕçлеме 9, 10 класс пĕтернĕ ачасене ĕçлеме янă. Çапла пирĕн коллектив пĕтĕмпех хĕр ачасенчен тăнă. Фронт валли виç пӳрнеллĕ алсишсем, нускисем, табак хутаççисем хатĕрлеме заданисем паратчĕç. Вара уроксем хыççăн ялсем тăрăх çăм пуçтараттăмăр, арлаттăмăр, çыхаттăмăр, çуса типĕтсе вăхăтра района çитереттĕмĕр. Ку ĕçсене уроксем пĕтсен пĕрле пухăнса улах ларнă чухне пурнăçлаттăмăр. Эпир, Шатракассисем, мала тухаттăмăр. Вара пирĕн профком председательне Ефимия Трофимовна Квасковăна учительсен конференцийĕнче сăмах паратчĕç. Директор эпир мĕнле ĕçленине пĕлсех каймасть, çавăнпа та ман тухса калама тиветчĕ. Пĕрремĕш çул ĕçлекенĕн, 19 çулхи хĕр ачан конференци залĕнче, трибуна умĕнче мĕнле каламалла-ха? Тухма та вăтанатăп. Кăлараççĕ – тухасах пулать. Пĕр пăнчăна тĕллерĕм те, халăх çине пăхмасăр, хамăр мĕнле майпа палăртнă вăхăта хатĕрлесе панине каласа патăм. Кайран майĕпен халăх умĕнче калаçма вĕренкелерĕм.

Учительсем çитмен пирки истори предмечĕсĕр пуçне мана нимĕç чĕлхи вĕрентме хистеме пуçларĕç. Килĕшрĕм. Хам вĕренетĕп, ачасене вĕрентетĕп. Кайран Горький хулинчи пединститутри нимĕç чĕлхи факультетне вĕренме кĕтĕм. Малтанхи çулĕнче вĕрентĕм, кайран эрнере пĕр кун практикăна пыма чĕнеççĕ. Кайма пĕр кун, практики пĕр кун, киле килме тата тепĕр кун. Çапла эрнере 3 кун шкулта пулаймастăп. Кам ман вырăна вĕрентет? Хам тĕллĕн вĕренме тытăнтăм.

Етĕрне районĕнче семинарсем ирттеретчĕç, Шупашкарта курссенче вĕрентетчĕç. Пенсие тухиччен нимĕç чĕлхи вĕрентрĕм. Ачасем питĕ кăмăлласах вĕренетчĕç, вĕсен мĕнле вĕренес килет – çавăн пек вĕрентме тăрăшаттăм, вĕсен йĕрĕ çине ӳкме тăрăшаттăм. Хăш-пĕр чухне пĕр-пĕр учитель чирлесен вăл урок вырăнне нимĕç чĕлхи тусан ачасем питĕ хĕпĕртетчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ эпĕ вĕрентнĕ ачасенчен 7-шĕ нимĕç чĕлхине вĕрентекенсем пулса тăчĕç. (Кунта хама хам мухтанă пекех пулса тухать те).

**(Малалли пулать).**

**О. ВИШНЕВА,**
**Шатракассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкул учителĕ.**

# Суту-илӳ ĕçĕ тивĕçлĕ шайра пултăр

Черетлĕ тĕрĕслев

Роспотребнадзор управленийĕн Чăваш Республикинчи территори уйрăмĕн тĕп специалист эксперчĕ Глафира Воробьева ертсе пынипе ĕç ушкăнĕ черетлĕ тĕрĕслевре пулчĕ, Мăн Сĕнтĕрти «Елена» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕ.

Асăннă организацире муниципалитет право акчĕсен требованийĕсемпе килĕшсе тăман, йĕркене пăхăнман хăш-пĕр самантсем палăрнă. «Еленăн» суту-илӳ залĕнчи çутă тивĕçлĕ шайра мар. Çунса кайнă лампочкăсем хăйсене улăштарасса чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Инвентарь çумалли ванна ĕçлемест. Çак самантсене санитарипе эпидемиологи требованийĕ хирĕçлет.

Сентре çинчи тавар хушшинче ача-пăча апатланăвĕ валли 0,2 литрлă пан улмипе иçĕм çырли сĕткенĕллĕ напиток тата «Фруктовый сад» пан улмипе иçĕм çырлин нектарĕ пур. Кирек епле тавар ценникĕ çинче те тулли информаци пулмалла, чи малтан вăл туянакана тивĕçтермелле. Çӳлерех асăннă таварсен ценникĕсем тивĕçлĕ шайра мар, вĕсем пирки информаци çителĕксĕр. Çакă РФ Правительствин 1998 çулхи 55 № «Уйрăм тĕслĕ тавар сутассин йĕрки» Постановленине пăхăнманни пулать. Тĕрĕслев ушкăнĕ йĕркене пăхăнман самантсем пирки асăрхаттарнă, палăртнă срок тĕлне çитменлĕхсене пĕтерме хушнă.

Ытти енĕпе çитменлĕх çук. Апат-çимĕç продукчĕсем валли сивĕтмĕшсем ĕçлеççĕ, документсем, склад пӳлĕмĕсем тата ытти ĕç-хĕл (çӳлерех асăннисемсĕр пусне) тивĕçлĕ шайра.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Хисеп грамотипе наградăланă

Райадминистрацире

***Район администрацийĕн 2013 çулхи августăн 28-мĕшĕнчи 906 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Александр Никандрович ВАНЮШКИНА**, индивидуаллă предпринимателе – пĕчĕк тата вăтам предпринимательство аталанăвне пысăк тӳпе хывнăшăн;

– **Лев Федотович НИКОЛАЕВА**, Ильинка участокĕнчи вăрман мастăрне – вăрман хуçалăх аталанăвĕнче ăнăçусем тунăшăн тата нумай çул ӳсĕмлĕ ĕçленĕшĕн.

Машинăсем тăвас ĕçри пысăк ăнăçусемшĕн, нумай çул тухăçлă ĕçленĕшĕн:

– **Михаил Христофорович КОЗИЦЫНА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприятийĕ» акционерсен хупă обществин слесарьне;

– **Сергей Владимирович КОЗИНА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществин газпа касакан ĕçченне;

– **Алексей Юрьевич МАТВЕЕВА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществин слесарьне;

– **Николай Григорьевич МОРОДИНА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществин электрогазосварщикне;

– **Иван Евгеньевич МУЗЫКОВА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществин электрогазосварщикне;

– **Гера Германович МАЙКОВА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществин бригадирне;

– **Максим Вадимович САРАНДЕЕВА**, «Шупашкарти «Сеспель» предприяти» акционерсен хупă обществин ертсе пыракан инженер технологне.

Следстви комитетĕнчен

# Кăмăл-туйăма чарар е...

Илĕртӳллĕ те лăпкă çанталăк хуçаланать. Пĕр çуртра вăтăр çула çывхаракан яш тата вун ултă та тултарайман хĕр ача. Кăмăл-туйăм вара ирĕке тухасшăн. Каччă çулĕпе самай аслă пулнипе малашне мĕн пулассине аван чухлать ĕнтĕ. Çапла вара вăл хĕр айванлăхĕпе усă курать. Кунта РФ УК 134 статьян 1 пайĕнчи йĕркене пăсса преступлени тунă факт çителĕклĕ. Çакна шута илсе каччă тĕлĕшпе уголовлă ĕç пуçарма йышăннă.

**Следстви комитечĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

Ыйтăва уçăмлатса

# Инкек тӳснĕ çыннăн шухăшĕ пĕлтерĕшлĕ

**Айăплав тапхăрĕнчен условлă майпа срокчен хăтарнă чухне инкек тӳснĕ çыннăн шухăш-кăмăлне шута илеççĕ иккен, çак йĕркепе тĕплĕнрех паллаштарма ыйтатпăр.**

Кăçалхи августăн 5-мĕшĕнче 221 – ФЗ хăш-пĕр улшăну вăя кĕчĕ. Çавна май айăплав тапхăрĕнчен условлă майпа маларах палăртнă срокчен хăтарас тата ытти вăхăта айăплавăн çемçерех мелĕпе улăштарас ыйтусене пăхса тухнă чухне суд ларăвĕнче инкек тӳснĕ çын е унăн саккунлă представителĕ, е представителĕ пулма ирĕклĕ.

Çапла вара инкек тӳснĕ çын е унăн саккунлă представителĕ, е представителĕ суд ларăвне хутшăнма е видеоçыхăну мелĕпе усă курма пултарать. Вĕсене çак ĕçе ăста, хăçан тата миçе сехетре ирттерессине маларах пĕлтермелле. Палăртнă вăхăта, вырăна çитменни тата хăйсен хутшăнăвĕ кирлĕ пулнине пĕлтерменни суд ларăвне ирттерессинче чăрмавлă мар.

**В. ШАШКОВ,**
**юстици советникĕ.**

Сăвă

# Аван шкулта пĕлӳ илме

Паян пĕрремĕш хут уçатăп
Пĕлӳ тĕнчийĕн алăкне.
Кăшт пăлханса кĕрсе ларатăп
Эп çĕнĕ парта хушшине.

Класс алăкне учитель уçрĕ,
Чечек çыххи ун аллинче.
Пире кулса вăл саламларĕ,
Куçсем каймаççĕ ун çинчен.

Шур пурăпа илемлĕн çырчĕ
Доска çине сăмахсене.
Вĕсем пит хаклине пĕлтерчĕ,
Вуларĕ тимлĕн кашнине:

«Атте, анне, Тăван çĕр-шыв та
Çак пурнăçра, ачсем, пĕрре,
Кирек ăçта, епле пулсан та
Вĕсем ыр сунĕç çеç сире.

Юратăр та, туссем, ан манăр
Кашни çак виçĕ сăмаха.
Вĕсем пит хаклине ас тăвăр
Ăша хывса яланлăха».

Пĕлӳ пит кирлине ăнлантăм
Учителе итленĕçем.
Мĕн чуль çĕнни чуна эп хыврăм,
Епле аван шкулта, туссем!

**Игорь МАЙКОВ.**

Кашмаш ялĕ.

# Вăхăтра асăрханă

Полици хроникинчен

**Оринин ялĕнче пурăнакан арçын августăн 23-мĕшĕнче районти шалти ĕçсен пайне шăнкăравлать. Çакна валли сăлтавĕ те пулнă.**

Пахчасенчен инçе мар ларакан çăмăл машинăна арçын ку таранччен ял тăрăхĕнче курман, çавăнпа та машинăран инçе мар пахчасенче темĕн пухакан икĕ каччă та ăна шанмалла мар çынсем пек курăннă. Çакăн пирки вăл çийĕнчех уголовлă шырав уйрăмĕн пуçлăхне шăнкăравласа пĕлтерет.

